Район йĕркеленнĕренпе 65 çул çитнине халалласа

«Фронтра илтсе савăнтăм»

– Тăххăрмĕш теçеткепе утатăр та район йĕркеленнине те лайăх астăватăр пулĕ. Мĕнле йышăнтăр эсир ку хыпара? – тўррĕн ыйтрăм Мулкачкассинче пурăнакан ĕçпе вăрçă вĕтеранĕнчен Николай Якимович Васильевран.

– Ку хыпара эпĕ иккĕмĕш тĕнче вăрçин фронтĕнче килтен килнĕ çыруран пĕлтĕм. Вăрçăна пăхмасăр пурнăç малалла кайнишĕн савăнтăм. Фронта эпир ялтан 6 çамрăк 1943 çулхи чўк уйăхĕн 9-мĕшĕнче тухса кайрăмăр. Вăрçă хыççăн 5-ĕн киле таврăнтăмăр. Паян Г. Бардасовпа иксĕмĕр пурăнатпăр. Салтака кайиччен медицина тĕрĕслевне Муркашра тăраттăмăр. Çар комиссариачĕ вара Мăн Сĕнтĕртеччĕ. Унтан пире лашасемпе Канаша илсе кайрĕç, – терĕ район пуçламăшне епле йышăнни пирки калаçма пуçласан Николай Якимович. – Унтанпа 65 çул иртрĕ. Паян Муркаш республикăра та ятлисен шутĕнче. Çакăнта пирĕн ăру фронтра юн тăкни, тылра юлнисем ырми-канми ĕçлени çирĕп никĕс пулса юлни курăнать.

...Ман умра пурнăçра хурашурне пайтах курнă-тўснĕ, анчах чунри тасалăхпа тирпейлĕхе, ĕçченлĕхе çўллĕ шайра сыхласа хăварнă Мария Степановнапа Николай Якимович Васильевсем лараççĕ. Вĕсен пичĕсемпе ĕçре писĕхнĕ аллисем çинчи кашни пĕркеленчĕкрех иртнĕ ĕмĕрĕн утăмĕсем, çĕр-шыв аталанăвĕн паллисем, тертнушана халăхпа пĕрле чăтса ирттернисем. Вĕсем 60 çул çемье ăшшине пĕрле тытса пынине шутларăм та куçсем шывланчĕç... Урăхла еплеха. Пурнăç хурлăх куççулĕ юхтарса сахал уйăрнă-и вĕсене, савăнăç куççулĕпе сахал пĕрлештернĕ-и? Анчах вĕсем çав-çавах пĕрле, 22 çулхи пекех çемье ăшшине пĕрле тăваççĕ, вăхăтра ачисем çине пăхса ăшшăн кулнă пек халĕ прамăнукĕсемпе киленеççĕ. Ку вăл паян, çемье çавăрнă хыççăн 61 çул иртсен, вĕсем пуррăнă çулсем çине шурă ăмсанупа савăнăç куççулĕ витĕр пăхсан...

Мулкачкассипе Оринин тăрăхĕсен кун-çулне сăнлакан вуншар историлле материалсене пăхса ларнă май Николай Якимович аса илў çăмхине те ытларах та ытларах сўтет. Пĕлмелли-вĕренмелли вĕсенче сахал мар. Тăван çĕр-шывăн вăрçи вăл е ку çемьене мĕнле пырса çапни, ял çыннисем çĕр-шыва пулăшас ĕçе мĕнле тўпе хывни, яла мĕнле хăнасем килни, хăйĕн камсемпе хутшăнма тивни, ял çыннисем ĕçре мĕнле хисепсене тивĕçни, район епле аталанса пынине тишкерни – йăлтах пĕр çын аса илĕвĕнче.

1926 çулта çуралнă Николай 7 çулта Мулкачкассинчи пуçламăш шкула вĕренме кĕнĕ. Пĕлў çулĕнчи пĕрремĕш утăмсем килĕшнĕ ăна: арçын ача кĕнекесемпе çирĕп туслашнă, вуласçырассине çирĕп кун йĕркине кĕртнĕ. Тăрăшулăхне кура Коля 4-мĕш класран хавхалантару хучĕ илсе тухать. Çапла вара пĕлў çулĕнче çирĕп никĕс тăвать. 1941 çулхине ял ачи Орининти тинтерех уçăлнă вăтам шкулăн 8-мĕш класне каять. Тăван çĕр-шыв фашизмпа кĕрешнĕ вăхăт. Ялти арçынсем пĕрин хыççăн тепри фронта каяççĕ, каялла вара кунсерен тенĕ пек пирĕн салтаксем пуç хуни пирки виç кĕтеслĕ çырусем килеççĕ. Талăкĕпех ĕç умĕнчен кайман хĕрарăмсем мăшăрĕсемпе ывăлĕсен вилнĕ хучĕсене вула-вулах тырă вырни паян та Николай Якимович асĕнче. Каччă ретне кĕнĕ Кольăшăн та вăл çулсем лăпкă пулман: ирлесе шкулта, уроксем хыççăн вара – хирте, халăхпа пĕрле. Хăçан вĕçленĕ ку вăрçă?

– 1943 çулта, ĕнер вăтам шкул пĕтернĕскерсене, пире ялтан 6 çамрăка Сĕнтĕрти çар комиссариачĕ урлă çара илчĕç. Çийĕнчех Инçет Хĕвел тухăçне ăсатрĕç. Япония хирĕç чикĕре тăма тиврĕ. Хĕвел анăçĕнчи лару-тăрупа интересленсех тăраттăмăр. Умри чикĕрен те куç каймастчĕ. 1945 çулта вăрçа чарăннине илтсен, пурте савăнтăмăр, анчах умра Яппун самурайĕсем пур-ха, вĕсемпе мĕнле пулмалла? Çак çулхи августăн 8-мĕшĕнче Сталин приказĕпе эпир те наступление кайрăмăр. Сахал мар юн юхрĕ, анчах Аслă çĕнтерў хыççăн унăн хавхалантарăвĕпе самурайсене те кĕске вăхăтрах çапса аркатрăмăр, – аса илчĕ ĕçпе вăрçă ветеранĕ.

Ырă малашлăх пирки ĕмĕтленнĕ арçын мирлĕ пурнăçра та хăюллăха çухатман, хăйĕн пĕтĕм пултарулăхне халăх хуçалăхне, тăван ене çирĕп ура çине тăратас ĕçе хывнă.

Фронтран таврăнсан бухгалтери курсĕнчен вĕренсе тухнă Н. Васильев малтанах 12 çул «Восток» колхозра бухгалтер пулса ĕçлет. Унтан 3 çул агрономра ĕçленĕскер 1966 – 1977 çулсенче «Восток» хуçалăха ертсе пырать, ĕç кăтартăвĕсемпе Мулкачкассисене районта çеç мар, республикăра та мала кăларать. Вăл çулсенче хуçалăх уйрăмах сĕт сăвассипе, аш-какай туса илессипе палăрнă. Паянхи **сăн ўкерчĕкре** эсир Мулкачкассинчи малта пыракан дояркăпа Полина Ананьевна Сидюшкинапа Н. Васильев (сылтăмра) хуçалăха панă икĕ Хĕрлĕ ялава илнĕ саманта куратăр. Ĕçлеслĕхе нихăçан та хавшатман пирĕн ветеран 1977 çулта халăх хăйне Оринин ял Советне ертсе пыма суйласан та 1987 çулччен шанăça тўрре кăларса ĕçлет. Хăйĕн пурнăç çулĕ çинче мăшăрĕ Мария Степановна тăтăшах пулăшса-хавхалантарса пыни пысăк тĕкĕ пулнине Николай Якимович паян пĕртте пытармасть. 61 çул вĕсем пĕрле. Икĕ ывăлпа виçĕ хĕр кăларчĕç пурнăç çулĕ çине. Пархатарлă пурнăç мар-им-ха çакă?

А. ПЕТРОВ.

Район пурнăçĕ кĕске хыпарсенче

Отчетлă пухусем умĕн

Кун вăрăмланнипе пĕрлех урамра нарăс уйăхĕ хуçаланма пуçларĕ. Çил-тăманлă кунсем ытларах пулсан та, çĕр ĕçченĕ вăхăт çур аки еннелле кайнине сисет. Анчах унччен ял хуçалăх производство кооперативĕсенче 2008 çулхи ĕçсене пĕтĕмлетсе пĕрлехи пухусем туса ирттермелле. Çак пухусем кăçалхи ăнăçлă ĕç-хĕлĕн никĕсĕ пултăр тесен хуçалăх ертўçисемпе специалисчĕсен тата çĕр ĕçченĕсен вĕсене тĕплĕ хатĕрленмелле. Производствăпа финанс планĕсене пăхса тухасси, умри тĕллевсене çирĕплетесси, çывхаракан çур аки валли сĕрмелли-çунтармалли материалсемпе минераллă удобренисем тата паха вăрлăхпа юсавлă техника хатĕрлесси, çурхи уй-хир ĕç планĕсене тишкересси – пухусем пуçланиччен туса ирттермелли ĕçсем. Хуçалăхсем çак ĕçсене иккĕмĕш вырăна хăвармасса шанатпăр.

А. ПАВЛОВ,
район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕн çумĕ.

Профинплансем хатĕрлеççĕ

Çывхаракан çур акине хатĕрленесси хуçалăхсем паянах çитес ял хуçалăх çулĕ валли производствăпа финанс планĕсем хатĕрлеме тытăннинчен пуçăнать. Çакна пурте пĕлсе тăратпăр пулсан та, хăшĕсем ку ĕçе иккĕмĕш вырăна хуни никама та савăнтармасть. Паянхи куна производствăпа финанс планĕсене район администрацийĕн экономика пайне «Свобода», «Герой», Суворов яч. хис., «Передовик» хуçалăхсем тăратрĕç.

Н. СЕМЕНОВА,
экономика пайĕн тĕп специалист-эксперчĕ.

Виçĕ çынна çăлса хăварнă

2009 çулăн пĕрремĕш уйăхĕ иртсе кайрĕ пулин те, вăл сисĕнмесĕрех хыçа юлчĕ тесе калаймăн. Январь уйăхĕнче район территорийĕнче 4 пушар алхасрĕ. Пушар сўнтерекенсем вăрăна вăхăтра çитнипе тата çынсем пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăннипе кăна çулăм тыткăнĕнче çынсем вилни пулман. Акă январĕн 18-мĕшĕнче Муркашри пĕр хваттерте эрех ĕçнипе пĕрлех пирусран уйрăлайман «каппайчăксем» хăйсем çывăрнă пўлĕмре пушар кăларнă. Инкеке вăхăтра асăрханипе тата çăлавçăсем вырăна вăхăтра çитнипе кăна виçĕ çыннăн пурнăçне сыхласа хăварма май килчĕ. Эрехпе пирус юлташсем пулманни куçкĕрет.

Çавăн пекех Йўçкасси ял тăрăхĕнчи Вăрманкасси ялĕнче газ плити çине сысна çăвĕ ирĕлтерме лартнă кил хуçи самантлăха ыйха путнăран пўлĕме «хĕрлĕ автан» пырса кĕнĕ. Инкеке вăхăтра асăрханипе кил хуçи вут-çулăма анлă сарăлма паман.

Калмăк ялĕ çывăхĕнче Мускав автомашинине кĕске замыкание пула çулăм хыпса илсен, водитель çумра пулнă огнетушительпе пысăк инкеке вырăнтах сирсе ярать.

Январĕн 31-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Шупуç ялĕнче уйрăм çын харпăрлăхĕнчи пысăк сарай çивиттийĕ кĕлленчĕ. Ку инкек тĕлĕшпе çакă паллă. Хуçа тивĕçлипе пăхса тăманран сарайĕнче пулăссем унччен те вут чĕртсе ăшăнни пулнă...

Асăрханулăха çухатсан инкек юнашарах.

А. ЕФИМОВ,
патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн аслă инспекторĕ.

«Çавра сĕтел» хушшине калаçăва чĕнетпĕр

Патшалăх пулăшăвне кĕтмелле е?..

Харпăр хăй пахчинчи çимĕçпе тăранса пурăнаймасан, кўршĕнелле пăхнипе инçех каяймăн. Ку вăл кашни çĕр ĕçлекеншĕн таса тĕрĕслĕх пулнă, пур, пулать те. Ана самантлăха та асран кăлармасăр хресчен вуншар-çĕршер çул хăйне шанса панă çĕр çинче çич хут тар юхтарса ĕçленĕ, кĕр уявĕсенче ĕçсене пĕтĕмлетсе никамран вăтанмасăр савăннă, тулăх кăмăла юрă урлă ыттисем патне çитернĕ. Анчах... Юлашки çулсенче вăрман пек çум айĕнче выртакан анлă уй-хир иккĕлле шухăш çуратать. Ĕнерхиллех аталанмалла-и ял хуçалăхĕн, патшалăх пулăшăвĕ çине çеç шанса лармалла-и, ял çыннине чăннипех çĕр хуçи тумалла-и, икĕ енлĕ ларутăрура хăш çулне суйласа илни пуриншĕн те вырăнлă пулĕ тата çĕрĕн чăн хуçи тупăнĕ-и? Ыйтусем нумай, анчах çак темăпа хаçат страницисенче уçă калаçусемех пулманччĕ-ха. Пĕтĕм Раççейри «Единая Россия» политика партийĕн пирĕн районти уйрăмĕ иртнĕ ытлари кун, нарăс уйăхĕн 10-мĕшĕнче, çак çитменлĕхе пĕтерсе çĕр ĕçĕнчи канăç паман ыйтусене çивĕчрех çĕклес тесе хăйĕн офисĕнче «Çавра сĕтел» ирттерчĕ. «Эпир паян нимĕнле йышăну та тумастпăр. Пирĕн паянхи тĕллев çынсене Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕнче хăйсене хумхантаракан ыйтусемпе уççăнрах калаçма чĕнесси», – терĕ çавра сĕтел хушшине пуçтарăннисене ĕçлĕ калаçăва чĕнсе Пĕтĕм Раççейри «Единая Россия» политика партийĕн пирĕн районти уйрăмĕн секретарĕ Альберт Иванов.

Малтанах пухăннисене район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертўçи Владислав Ананьев Муркаш Енри ял хуçалăх отраслĕсен аталанăвĕпе паллаштарчĕ, кашни сăмахах тĕслĕхсемпе çирĕплетрĕ.

Районти пусă çаврăнăшне кĕртмен çĕрсене сухаласа акма тата ялсенче çĕр йĕркелĕвне хăвăртрах вĕçне çитерме, обществăлла секторти вылăхчĕрлĕх йышĕ чакассине чарса лартма, «Ял хуçалăх кооперацийĕ çинчен» федераллă саккуна ăнăçлăрах ĕçлеттерме пире мĕн чăрмантарать? Çак ыйтусене сўтсе явма çавра сĕтел хушшине район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе, ял хуçалăх пайĕн ертўçипе В. Ананьевпа пĕрле «Росгосстрахăн» Чăваш филиалĕн Муркашри страхлакан пайĕн пуçлăхĕ В. Вязов, «Ударник» сăнавлă производство хуçалăхĕн, «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕн ертўçисем П. Давыдовпа Р. Тимофеев, районти депутатсен Пухăвĕн председателĕ тата Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн ертўçи И. Николаев, районти ветерансен канашĕн членĕ А. Петров, «Единая Россия» политика партийĕн Чăваш регионĕнчи ĕç тăвакан комитечĕн Муркаш районĕпе ĕçлекен кураторĕ Н. Полозина пухăнчĕç.

– Патшалăх çĕр ĕçченĕ çине пачах пăхмасть тени те тĕрĕсех мар. Инвесторсем хутшăннипе республикăра пысăк комплекссем ўссе ларнă тĕслĕхсем пур. Пирĕн тĕп ыйту, ман шутпа, кадрсемпе ĕçлесси. Çак ыйтăва кун йĕркинче тытакан хуçалăхсем рынок хутшăнăвĕсенче те çухалса каймарĕç. Тĕслĕхрен, Ильич яч. хис., Суворов яч. хис, «Герой», «Оринино», «Свобода», «Ударник», Чкалов яч. хис. хуçалăхсемпе «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики. Асăннă хуçалăхсем, çăмăллăн мар пулин те, ыранхи кунпа пурăнаççĕ, – терĕ Владислав Кириллович Ананьев.

– Хуçалăхсем каялла утăмлама пуçлани паян-ыран чарăнса лармĕ-ха. Кунта çĕр-шыв пирĕн çине çаврăнса пăхни те кирлĕ. Пĕлтĕрхи январе кăçалхипе танлаштарсан, сĕт хакĕ ўкнипе кăна, выльăх шайне чакармасăрах, эпир 300 пин тенкĕне яхăн çухатрăмăр. Çав вăхăтрах çĕр ĕçне пахалăхлă пурнăçлама кирлĕ минераллă удобрение пирĕн кăçал унччен çулсенчи пек малтанлăха 50 процент тўлесе мар, 100 процент тўлесе илмелле. Вăл панă тупăш вара кĕркунне тин паллă пулать. Çакăн пирки шутлакан çук пек курăнать, – пăшăрханса калаçать «Герой» хуçалăх ертўçи Р. Тимофеев.

А. БЕЛОВ.

(Малалли пулать).

Сунар ыйтăвĕсемпе

РФ законодательствипе килĕшўллĕн пирĕн граждансем палăртнă тапхăрсенче хăйсен вăхăтне сунара çўресе ирттерме пултараççĕ.Сунара çўремелли право паракан документ вăл – «Россельхознадзор» управленийĕ паракан сунарçă билечĕ. Ăна илме граждансен сунарти хăрушсăрлăх правилисене, сунар пăшалĕпе усă курмалли йĕркене пĕлни кирлĕ. Сунарçă билетне 18 çул тултарнă граждансене хăйсем пурăннă вырăнта 5 çуллăха параççĕ. Вĕсене çулленех пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен панă вырăнсенче регистрацилемелле. Регистраци паллисĕр сунарçă билечĕ юрăхлă мар.

Юлашки çулсенче сунар ыйтăвĕпе ĕçлекен çын пулманран районта ку ĕç хăй еккипе каясси патнех çитнĕччĕ. Халĕ апла пулмĕ. Сунар ыйтăвĕсемпе интересленекен граждансене эпир малашне кашни ытлари кунах районти Культура çуртĕнче 9 – 16 сехетсенче йышăнăпăр.

В. КОЧКОМАЗОВ,
«Россельхознадзорăн» сунар управленийĕн, вăрмансенчи пушар надзорĕн, вăрман тĕрĕслевĕн специалисчĕ.

Пĕрле пулса чысларĕç

Районти шкулсенче çарпа патриотика тата оборонăллăмассăллă ĕçсен уйăхлăхĕ пырать. Вăл ытларах шкулсенче иртет пулин те, çак ĕçрен Тăван çĕр-шыва юратакан пĕр çын та пăрăнса юлмасса шанатпăр. Çакăнпа пĕрлех кăçал Совет салтакĕсене кўршĕллĕ Афганистан Республикинчи вăрçăран кăларнăранпа 20 çул. Çĕр-шыв интересĕсене хўтĕлесе кўршĕллĕ çĕр-шыври вăрçăна вунă çул хутшăннă çар подразделенийĕсене унтан 1989 çулхи нарăсăн 15-мĕшĕнче кăларсан, пирĕн салтаксемпе офицерсемшĕн унти вăрçă тинех чарăнчĕ. Сăртлă-туллă çĕр-шыври вĕсен паттăрлăхĕ вара нихăçан та пирĕн асран тухмĕ, манăçмĕ. Вăл паян çар ретне тăракансемшĕн, шкулта вĕренекенсемшĕн ырă тĕслĕх. Паттăрсен ячĕсем ăруран ăрăва куçмалла. Эпир çакна тума пултаратпăр пулсан, пирĕн ачасен чĕрисенче те паттăрлăх туйăмĕ иксĕлмĕ.

Нарăсăн 9-мĕшĕнче районти интернационалист-салтаксен канашĕн пуçарăвĕпе канаш председателĕн çумĕ К. Петров, ЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин Муркаш районĕнчи социаллă хўтлĕх пайĕн ертўçи Н. Петрова инçетри Афганистанра çĕр-шыв интересĕсене хўтĕлесе пуç хунă ентешсен ашшĕ-амăшĕсем патĕнче пулса курчĕç, парнесем пачĕç. Çавăнпа пĕрлех çемьери йывăрлăхсене кура 7 афганеца (П. Ботникова, Г. Данилова, Ю. Яковлева, М. Моторкина, А. Матвеева, А. Иванова, В. Чернова) материаллă пулăшупа хавхалантарчĕç.

Хыççăн Муркашри лицейре К. Петров, В. Максимов, И. Колесников интернационалист-салтаксем тата шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е. Макаров, Муркашпа Элĕк районĕсен çар комиссарĕ А. Прокопьев паттăрлăх урокĕ ирттерчĕç.

А. БЕЛОВ.